27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
6
ЮНКУН
176(6671) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кĕрхи çĕртме—килес çулхи вăйлă тырпул никĕсĕ

Кĕрхи çĕртме туни тырпул тухăçлăхне ÿстерес ĕçре мĕн тери пысăк вырăн йышăнса тăнине колхозсен нумай çул хушшинчи опычĕ аван кăтартса пачĕ. Лайăх та тĕплĕн туса хăварнă кĕрхи çĕртме тăпрари нÿрлĕхе пуянлатма, тăпра структурине лайăхлатма, килес çуракинчи ĕçсене çăмăллатма, çавăн пекех тата тырпулсене сиенлекен хурт-кăпшанкăсен тĕввисемпе çăмартисене пĕтерме пулăшать. Кĕрхи çĕртмен уссине В. Р. Вильямс академик наука енчен тĕплĕн çутатса парса, ку тĕлĕшпе хăйĕн системине тупнă. Çав система тăрăх, кĕрхи çĕртме сухине тăвиччен малтан çав çĕр çинчи хăмăла лущильникпе тăпăлтарса тухмалла, унтан вара 16—20 сантиметр тарăнĕш сухаламалла. Çакăн пек тусан кăна кĕрхи çĕртме паха пулать.

Кĕскен каласан, кĕрхи çĕртме килес çулхи вăйлă тырпулăн никĕсĕ пулса тăрать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ августăн 16-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, республикăри пур колхозсен те кĕрхи çĕртме сухине тума августăн 20-мĕшĕнче тытăнмаллаччĕ. Çак пысăк ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнланса илнĕ районсемпе колхозсен руководителĕсем кĕрхи çĕртме тума ыраш акса пĕтернĕ хыççăн е тата унтан та маларах тытăнчĕç. Çавăн пек руководительсем хăйсен ĕçĕсене черетпе мар, пурне те пĕр вăхăтрах, кал-каллăн та йĕркеллĕн туса пыма пĕлеççĕ. Çапла, Елчĕк районĕнчи «Марс», «Осоавиахим», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем кĕрхи тырăсем акнипе пĕр вăхăтрах кĕрхи çĕртме тума пуçланă; ыраш акса пĕтернĕ хыççăн вара вĕсем унта ĕçленĕ лашасемпе çынсене çийĕнчех кĕрхи çĕртме çине куçарнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, Елчĕк районĕ сентябрĕн 4-мĕшĕ тĕлне 798 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Çавăн пекех Советски районĕнчи колхозсем те 650 гектар сухаланă. Вĕсем хыççăн Вăрмар, Сĕнтĕрвăрри, Красноармейски, Чурачăк, Çĕрпÿ районĕсем пыраççĕ.

Анчах ыттисенчен лайăхрах ĕçлекен çак районсем те кĕрхи çĕртме тумалли пилĕккунхи графиксене пурнăçа кĕртсе пыраймаççĕ-ха. Иртнĕ пилĕккунлăхра çав районсен кашнин 600 гектартан пуçласа 900 гектара çити сухаламалла пулнă. Халĕ пулать, малашнехи пилĕккунлăхсенче график пысăклансах пырать. Çавăнпа та ĕнтĕ ку тĕлĕшпе ĕçе лайăхрах организацилени, вăйсене ытларах мобилизацилени кирлĕ пулать.

Халĕ çанталăк лайăх тăрать. Тăпра йĕпе-сапа чухнехи пек йывăр мар. Унсăр пуçне, сентябрь уйăхĕнче [illegible] пахарах пулать. [illegible]

[illegible] Йĕпреç, Комсомольски, Куславкка, Октябрьски, Первомайски, Пăрачкав, Шăхасан, Тăвай районĕсенче кĕрхи çĕртме тума пачах та тытăнман. [illegible]

хи çĕртме тăвас ĕç мĕнле пыни пирки йышăннă постановленире те.

Совнаркомпа Обком районсемпе колхозсен тата МТС-сен руководителĕсене кĕрхи çĕртме тунă çĕре тивĕçлĕ таран тракторсем, лашасемпе çынсем яланлăха уйăрса пама кăтартнăччĕ. Çакна чылай çĕрте паянхи кунччен те пурнăçа кĕртмен. Сăмахран, Çĕмĕрле МТС-ĕн газогенераторлă 14 трактор пур. Вĕсене краççын тавраşĕ кирлĕ мар, йывăç чуркăсем кăна кирлĕ. Анчах вĕсенчен 4 трактор пачах ĕçлемесĕр лараççĕ, ытти вуннăшĕ ыраш акма çĕртме сухине тепĕр хут сухаланă çĕрте ĕçлеççĕ. Тепĕр хут сухаласси вăл, ăщăх сухаламалла пулнă пирки, — çăмăл ĕç. МТС кунта, сухалас тĕлĕшпе плана çăмăллăнах ирттерсе тултарса, мухтанма пултарать, çав вăхăтрах йывăр та кирлĕ ĕç кая юлса пырать. Çавăнпа пĕрлех, ыраш акма çĕре тепĕр хут сухаланă çĕрте лашасемпе те, вăкăрсемпе те ĕçлеме пулать. Ку ĕçе çĕмĕрлесен çавăн пек организацилемелле пулнă та ĕнтĕ. Тракторсене вара, çăмăл ĕçре хăваласа çÿриччен, тахçанах кĕрхи çĕртме тунă çĕре куçармалла пулнă.

Ытти чылай МТС-сенче те тракторсене кĕрхи çĕртме тунă çĕре вăрахăн куçарса пыраççĕ, ĕçлессе те ку тĕлĕшпе сÿрĕк ĕçлеççĕ.

Республика Совнаркомĕпе парти Обкомĕ кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе кашни района пилĕккунлăх графиксем, кашни лашапа тата вăкăрпа кĕрхи çĕртме тумалли сезонри нормăсем панă. Лашапа сезонра кĕрхи çĕртме сухине, район уйăрмлăхне кура, 10—12 гектар, вăкăрпа 3—4 гектар сухаламалла. Çак нормăсене халех кашни колхозник патне çитерес пулать. Кунпа пĕрлех, колхозниксене сезонри нормăсене тултарнăшăн, партипе правительство кăтартнă тăрăх, 10 ĕçкунĕ çĕнĕрен хушса тÿлесси çинчен тата, çав нормăсене ирттерсе тултарсан, нормăран ытлашши сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсене икĕ хут ÿстерсе парасси çинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕçлекен кашни колхознике хăйне уйрăм участоксем уйăрса памалла, унăн ĕçне тĕрĕс шута илсе пымалла, кĕрхи çĕртмере ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сармалла.

Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕç пахалăхĕ çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхмалла. Мĕншĕн тесен, кĕрхи çĕртмене начар тусан, килес çуркунне пурпĕрех тепĕр хут сухаламалла пулать. Кĕрхи çĕртмене начар сухалани — вăйпа вăхăта ахаль сая [illegible]

[illegible]

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ЛОМЖА хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ХОРОМАНЫ, ХРОСТОВО, БОРОВЦЕ, ЯРНУТЫ, СУХЧИЦЕ, РОСОШ, ВОНСЕВО, ГУРЫ, НОВАЯ ВЕСЬ, ДЛУГОСЕДЛО, БЯЛЕ БЛОТО, БРАНЬШИК, ТУЖИН ятлă пысăк ялсем тата ЕЛЕНКИ, ГУЦИН, ПШЕТЫЧ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Румынире УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, Румыни çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕç захватчикĕсенчен БРАШОВ хулине ирĕке кăларнă. Малалла куçса пырса, фронт çарĕсем СИНАЯ, КЫМПИНА, ТЫРГОВИШТЕ, ГЭНЕШТИ, ТИТУ хулисене тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă, вăл шутра — ДОЙЧЕШТИ, ВАЛЯ, МАРЕ, ВИШИНА, МЫРША, ГИМПАЦИ, ПЕТРУ РАРЕШ, ЧОЛАНУ ятлă пысăк ялсем тата ДЕРСТЕ, ТИМИШУ-ДЕ-ЖОС, ТИМИЖУ-ДЕ-СУС, ПРЕДЯЛ, АЗУГА, БУШТЕНИ, СИНАЯ, ВАЛЯ-ЛАРГЭ, КОМАРНИК, КЫМПИНА, ЧОКЭНЕШТИ, БЫЛДАНА, ГЕРГАНИ, КОНЦЕШТИ, ТИТУ, КОЖОНАРУ, ГЭНШТИ, БОЛОВАНЫ, НУЧЕТ, ВЭКЭРЕШТИ, ТЫРГОВИЩТЕ, ДОЙЧЕШТИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Сентябрĕн 2-мĕшĕпе 3-мĕшĕнче БАКЭУ хулинчен кăнтăртарахра УКРАИНĂРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен хĕвеланăçнелле тухса тарма хăтланнă çарĕсен ушкăнне пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 3.000 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ тата 3.500 гитлеровеца тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче —нимĕçсен 370-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирĕ фон ГЮЛЬЗЕН генерал-майор. Çапла ĕнтĕ, тăшманăн Кишинев хули патĕнче çавăрса илнĕ группировкинчи çарĕсен юлашки чаçĕсене пĕтерсе тăкнă.

ДУНАЙ шывĕ çинчи КЭЛЭРАШИ хули районĕнче сентябрĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче УКРАИНĂРИ 3-мĕш фронт çарĕсем 6.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити тыткăна илнĕ. Тыткăна илнисем хушшинче — нимĕçсен 18 полковникĕ тата 100 ытла аслă тата вăтам офицерĕсем. Паллă пулнă тăрăх, çав тыткăна лекнĕ çарсен пĕр пĕчĕк пайĕ БРАИЛОВ хули районĕнче çĕмĕрсе тăкнă нимĕç чаçĕсен юлашкийĕ пулса тăрать, çав тыткăна лекнĕ салтаксен ытти пысăк пайне нимĕçсем Болгарирен Румыние илсе пынă, вĕсене Хĕрлĕ Çар Бухарест патне çывăхарса пынă чухне Бухарест хулине кăнтăр-хĕвелтухăç енчен атакăлама илсе пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çÿренĕ.

Сентябрĕн 3-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 13 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Ломжа хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçса пынă. Артиллери персе хатĕрленĕ хыççăн совет пехоти атака пуçласа янă та тăшман тăракан вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă. Нимĕçсем ку участокра хăватлă çирĕплетнĕ оборона тăрăхĕ туса хатĕрленĕ, çав оборона тăрăхĕнче темиçе лини траншей туса тухнă, вĕсене темĕн чухлĕ мина лартса тата пралук картисем туса тухса хÿтĕленĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн совет чаçĕсем нимĕçсен оборонине татнă та, çитĕнĕве вăйлатса пырса, халăх пурăнакан 100 пункта ытла туртса илнĕ. Кун каçиччен пирĕн чаçсем 1.600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 22 тупă, 12 миномет, 57 пулемет пĕтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем тăшманăн темиçе полкне уйрăм ушкăнсене сапаласа янă та пĕтĕмĕшпех аркатса тăкнă. Остроленко хулипе Вышкув хули хушшинчи чугун çул çывăхĕнче Гуры ялне туртса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 1.800 вилли выртса юлнă. Нимĕçсенчен 6 артиллери батарейине, миномётсен 4 батарейине, боеприпас складне тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

Пирĕн бомбардировщиксемпе штурмовиксем тăшманăн çапăçури речĕсене тата унăн çулйĕрĕсене пыра-пыра çапнă. Горючи тултарнă 5 автоцистерна, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 120 автомашина пĕтерсе тăкнă, артиллерипе миномётсен 18 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Румынире Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем, Румыни çарĕн чаçĕсемпе пĕрле кĕрешсе, Трансильванири Альпы тăвĕсем урлă каçнă та Брашов хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Çак Румыни хули çулйĕрсен паха узелĕ пулса тăрать. Ку хулана 4 чугун çул тата 5 шоссе çулĕ пырать. Плоешти хулинчен хĕвеланăçнерехре фронт çарĕсем уйрăм участоксенче 50 километр таран малалла кайнă. Питешти хулинчен 30 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Валя-Марэ ялне тытса илнĕ. Нимĕçсем çĕнĕ резервсем куçарса пырса хăйсен вăйĕсене çĕнĕлле ушкăнласа лартмалăх вăхăт тупма тăрăшаççĕ. Совет чаçĕсем, тăшмана çавăрса илмелли маневрсемпе анлăн усă курса, тăшман гарнизонĕсене хупăрла-хупăрла илеççĕ те аркатса тăкаççĕ. Пĕр участокра кăна пирĕн боецсем нимĕç пехотине икĕ батальон пĕтерсе тăкнă, темиçе çĕр гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Валга хулинчен çурçĕртерехре тăшманăн баржăсем туртса пыракан катерĕсем Вылтс-Ярн кÿллин хĕвелтухăç хĕрринче десант антарма хăтланнă. Нимĕçсене пирĕн артиллеристсем пеме пуçланă. Тăшман пысăк çухатусем тÿснĕ хыççăн васкасах каялла чакнă.

* * *

Рига хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшмана хирĕç артиллерирен тата пăшалсемпе, пулеметсемпе персе тăнă. Гварди старши лейтенанчĕ Бойцов командир пулса ертсе пыракан разведчиксен ушкăнĕ, сасартăк пырса çапса, пĕр хутора йышăннă. Нимĕçсем, çав хутора каялла туртса илме хăтланса, хăйсен пехотин икĕ ротине контратакăна кĕртсе янă. Советсен 32 боецĕ хăйсенчен нумай йышлăрах тăшман вăйĕсемпе 4 сехет хушши хаяррăн çапăçнă, çав хутора хăйсен аллинчен вĕçертмен. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 40 вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра гварди старши сержанчĕн Дятловăн пулемет расчечĕ нимĕçсен атакине сирсе янă, 30 гитлеровеца ытла вĕлерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн штурмовиксем, виçĕ ушкăнпа вĕçсе кайса, тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири аэродромне ăнăçлăн тапăннă. Штурмовиксен пĕр ушкăнне ертсе пыракан Мурашкин майор тăшмана атакăлама аялалла вĕçсе аннă чухне аэродром çинчен нимĕçсен 4 истребителĕ вĕçсе хăпарма хăтланнине курнă. Пирĕн летчиксем çавăнтах тупăпа пеме тытăннă та тăшманăн çав тăватă истребителĕнчен иккĕшне пĕтерсе тăкнă. Виççĕмĕш самолетне гварди кĕçĕн лейтенанчĕ Захаров персе ÿкернĕ. Тăваттăмĕш истребительне çак ушкăн пĕрле çапăçса пĕтерсе тăкнă. Унсăр пуçне, пирĕн штурмовиксем нимĕçсен çĕр çинчи 6 самолетне çунтарса янă.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флотĕн бомбардировщикĕсем Балтика тинĕсĕнче тăшман суднисене атакăланă. Бомбăсем тÿп-тÿрех пырса тивнипе, нимĕçсен 6.000 тонна таякан транспорчĕ шыва путнă. Финн заливĕнче пирĕн летчиксем тăшманăн пĕр хăвăрт çÿрекен десант баржине шыва путарнă тата çавăн йышшиех икĕ баржине сиенленĕ.

Арменире çĕнĕ канал туса пĕтернĕ

Çак кунсенче Арменири Артикски районри колхозниксем Алагез тăвĕн çурçĕр айккинче çĕнĕ канал туса пĕтернĕ. Унăн тăршшĕ 7,5 километр. Çак канал — Арменире чи çÿллĕ вырăнта тунă канал пулса тăрать, ăна тинĕсрен 3.000 метр çÿллĕрех выртакан вырăнта тунă. Тусем хушшинче ĕçлеме йывăр пулсан та, колхозниксем çав канала чи кĕске срокра — уйăх çурă хушшинче — туса пĕтернĕ.

Арменире халь 6 пысăк канал тата 20 пĕчĕк канал тăваççĕ, вĕсен пĕтĕм тăршшĕ 200 километр пулать. Талинри канал кăна та 30.000 гектар типĕ хире чи лайăх хир, чечекленсе ларакан хир туса хурĕ. Каналсем тума кашни кун 4.000 колхозник тухать. (ТАСС).

ВОЕННĂЙ ЗАЕМ ВЫЛЯВĔ

Сентябрĕн 2-мĕшĕнче Мускавра 1942 çулта кăларнă Военнăй заемăн икĕ кун хушши пынă 4-мĕш вылявĕ пĕтнĕ. Вылявра мĕн пурĕ 1.017.750 выигрыш пулнă, вĕсем пĕтĕмпе 271.565.200 тенкĕлĕх пулнă.

Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи çыхăнусем çинчен

1. Сентябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Финлянди правительстви радиопа çапла пĕлтернĕ: Совет правительстви мир çинчен калаçас тĕлĕшпе лартнă малтанхи условие — Германипе çыхăнма пăрахма тата Германи çарĕсене сентябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр Финляндирен кăларса яма сĕннине — Финлянди йышăнчĕ, тенĕ.

2. Финлянди правительстви Совет правительствин çав условине йышăнни çинчен пĕлтернипе пĕр вăхăтрах, Финляндин çар командованийĕ Финлянди çарĕсем тăракан пĕтĕм участокра сентябрĕн 4-мĕшĕнче ирхине 8 сехетрен пуçласа вăрçă ĕçĕсене чарса лартни çинчен пĕлтернĕ.

3. Финлянди правительстви Совет правительствин малтанхи условине йышăннă пирки, Совет Союзĕн Верховнăй Командованийĕ Финлянди çарĕсем тăракан участокра сентябрĕн 5-мĕшĕнче ирхине 8 сехетрен пуçласа вăрçă ĕçĕсене чарса лартма приказ панă.

Совет Правительстви Болгари правительствине панă нота

1944 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче каçхине 7 сехетре СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Совет Правительстви хушнипе Болгарин Совет Союзĕнчи Посланникне И. Стаменова çакăн пек нота панă:

«Болгари виçĕ çул хушши ытла хăйĕн ĕçĕсемпе Совет Союзне хирĕç вăрçма Германие пулăшса тăчĕ. Совет Правительстви çакна шута илсе тăчĕ: Германи пĕтĕм Европăна тенĕ пекех хăйĕн аллинче тытса тăнă вăхăтра пĕчĕк çĕршыв Болгари Германин хĕçпăшаллă хăватлă вăйĕсене хирĕç тăма пултараяс çук. Çавăнпа Совет Правительстви çавăн пек лару-тăрăва чăтса тăчĕ. Болгарин ертсе пыракан ушкăнĕсем нимĕçсене Крымран куçма тата Совет Союзĕн кăнтăрти çĕршывĕсенче çĕмĕрсе тăкнă нимĕç çарĕсен юлашкисене çăлса хăварма пулăшнине те Совет Правительстви чăтса тăчĕ.

Анчах та кăçал çулла Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене вăйлă кризис пырса çапрĕ. Хĕвелтухăç енчен — совет çарĕсем, хĕвеланăç енчен — Франције пырса аннă союзниксен çарĕсем хĕскĕче хĕстерсе лартнă Германи катастрофа умне çитсе тăчĕ, унăн пуçĕпех çапса çĕмĕрнĕ хĕçпăшаллă вăйĕсем пур фронтсенче те ирĕксĕрех каялла чакаççĕ. Германи Италие тытăклăнах çухатрĕ. Германи Франције çухатрĕ. Кун хыççăн Германирен Румыни уйрăлчĕ. Финлянди пек пĕчĕк çĕршыв та уйрăлать, мĕншĕн тесен вăл курать: Германипе туслă çыхăну тытса тăни вĕсен çĕршывне пĕтерсе лартать.

Германи шăпине татнă ĕнтĕ. Германи ку вăрçăра пачах аяла пулчĕ.

Ĕçсем çапла пулса пынине кура, çакна кĕтме пулатчĕ: Болгари çавăн пек лайăх вăхăтпа усă курма шут тытĕ те, Румынипе Финлянди хыççăн, Германи майлă политикăна тытса тăма пăрахса, Германипе хутшăнса тăма та пăрахĕ, демократиллĕ çĕршывсен Гитлера хирĕç кĕрешекен пĕрлешĕвĕ çумне хутшăнĕ, теме пулатчĕ.

Анчах та, çапла пулин те, Болгари правительстви халĕ те Германипе лайăх пурăнмашкăн пăрахма килĕшмест, нейтралитет теекен политикăна тытса пырать, çавна пула вăл халĕ те çаплах Совет Союзне хирĕç вăрçма Германие тÿррĕнех пулăшса тăрать, мĕншĕн тесен нимĕçсен каялла чакакан вăйĕсене Хĕрлĕ Çар хăваласа пырассинчен хăтарса тăрать, Гитлера хирĕç кĕрешекен пĕрлешĕве тип çĕр çинче те, тинĕс çинче те Германи енчен хирĕç тăмалли çĕнĕ вырăн тума нимĕçсене Болгари çĕршывĕнче база парать.

Совет Правительстви Болгарин çавăн пек политикине çапла кăна хаклама пултарать: вăрçă обстановки Германишĕн тĕпренех начарланса çитнине пăхмасăр тата халĕ Болгари Германирен хăраса тăмасăрах Германипе лайăх пурăнма пăрахса хăйсен çĕршывне пĕтесрен çăлса хăварма пултарнине пăхмасăр, Болгари халĕ те çалпах тытса пыракан политика вăл—Германи лагерĕнче тăрса Совет Союзне хирĕç чăннипех вăрçни пулса тăрать.

Çавăнпа та, Совет Правительстви Болгарипе текех çыхăну тытса тăма май çук тесе шутлать, Болгарипе мĕн пур çыхăнусене пурне те татса çапла калать: чăннипе унччченех Совет Союзне хирĕç вăрçса тăнă Болгари кăна мар Совет Союзне хирĕç вăрçса тăрать, паянтан пуçласа Совет Союзĕ те Болгарие хирĕç çавăн пекех вăрçăллă лару-тăрура пулать.

Мускав, 1944 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕ.

Кăнтăрла иртни 7 сехет».

И. Стаменов господин Совет Правительствин ноти çинчен хăйĕн правительствине çавăнтах, пĕр чарăнса тăмасăрах пĕлтерме пулнă.

Сентябрь 5 — *Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх* — **Сентябрь 15**

Кашни колхозник нормăна тултарать

СОВЕТСКОЕ. Чемейри «Сеятель» колхоз членĕсем уйри тырпулсене пухса кĕртес ĕçе хăвăрт туса пыраççĕ. Ыраш вырнă çĕрте колхозниксен 50 проценчĕ кулленхи нормăна 150 процентран кая мар тултарса ĕçлерĕç, ыттисем те нормăна ытлашшипех тултарса пынă. Çавăнпа та колхоз ыраша планпа пăхнинчен 2 кун малтан вырса пĕтерчĕ.

Колхозниксем уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ. Ыраш кĕлтисене кĕртсе пĕтернĕ, авăн çапасси кашни кун хĕрÿллĕн пырать. Çапнă тырра фронтовик арăмĕ Зоя Николаева ертсе пыракан транспорт бригади хатĕрлев пунктне турттарса тăрать. Ыраш парса татнă хыççăн çуртыррисем лесме тытăнчĕç.

Çуртыррисене, пулса çитмен пĕчĕк участоксăр пуçне, типтерлĕн вырса пуçтарнă. Ку ĕçре жнейкăсемпе туллин усă курнă. Г. Соколовпа Г. Цветков машиноведсем кунне 3,5-шер гектар вырăнне 4,5-шер гектар вырнă.

Кĕрхи планне августăн 19-мĕшĕ тĕлне ытлашшипех пурнăçланă тата çĕр лаптăкĕн чылай пайне сеялкăсемпе акса хăварнă. Е. Герасимовăпа И. Киселев сеяльщиксем куллен 5-шер гектар акса пынă. Колхоз вăрлăхлăх клевăра та пухса кĕртрĕ.

Яков СИГАЙ.

Йĕпреçсем мĕншĕн кая юлаççĕ

Йĕпреç районĕнчи колхозсен кăçал тĕштырăсем 13.552 гектар вырса пухмалла. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 10.429 гектар кăна вырса пухнă, плана 77 процент тултарнă. Кунсăр пуçне, 513 гектар вăрлăхлăх хăварнă курăксем пур, вĕсене пухма пĕр колхозра та кирлĕ пек тытăнман. Районра ыраш акас ĕç те питĕ вăрăма тăсăлса пырать, кунта плана пурĕ те 81,8 процент çеç тултарнă. Районри колхозсен 6.000 гектар кĕрхи çĕртме тумалла, ку ĕçе пачах та тытăнман. Государствăна тырă парас тĕлĕшпе район республикăра 22-мĕш вырăнта тăрать, тырă памалли плана пурĕ те 16,2 процент кăна пурнăçланă.

Район çакăн пек хÿрере çапкаланса пыни пĕтĕмпех ĕçе кирлĕ пек организацилеменнинчен килет. Кунта туртăм вăйĕ сахаллине шута илсе, вăкăрсемпе, сĕт сахал паракан ĕнесемпе усă курасси çине кирлĕ пек çаврăнса пăхман. Пĕтĕм районĕпе те майракаллă шултăра выльăхсемпе 136 выльăхпа кăна ĕçлеççĕ, вĕсен шутне темиçе хут ÿстерме те пулать. Мĕншĕн тесен ĕçе явăçтармалли выльăхсен шучĕ 812 пуçа çитет. Çакăн чухлĕ вăкăрсемпе ĕнесене ĕçе явăçтарсан, вĕсемпе колхозсенчи шалти ĕçсене туса пырсан, государствăна тырă парас тата ыраш акас ĕçе 800 лаша ытла хутшăнаççĕ.

Районра лайăх ĕçлекен колхозсем пур. Сăмахран, «Путиловка», «Тымар» тата ытти те. Кунта уйрăм сдельщинăпа ĕçлеççĕ, чăн-чăн ăмăрту сарăлса пырать. Эйпеçри «8-ое Марта» колхозра уйрăм сдельщинăпа ĕçлени тырпулсене пухса кĕртес ĕçе нумай хăвăртлатрĕ. Д. Павлова ертсе пыракан звенори Е. Петрова, А. Тихонова юлташсем кулленхи нормăна икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ çак стахановкăсем тырă вырма тухнăранпа кăна 100-шер ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Вĕсем ĕçе çуталличчен тухаççĕ те тĕттĕм пулсан кăна таврăнаççĕ. Асăннă колхозсенче СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «Тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса панă.

Анчах «Красный урожай», «Костер», Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче уйрăм сдельщинăпа ĕçлемеççĕ, ĕçе кая юлса тухаççĕ, уйран ир таврăнаççĕ. Çав колхозсенче тырă вырас, кĕлте турттарса капана хывас, государствăна тырă парас ĕç ытла та начар пырать.

Район руководителĕсен малта пыракан колхозсенчи стахановецсен ĕç опычĕпе юлса пыракан колхозсенчи колхозниксене паллаштармалла. Партипе правительство тырпул пухса кĕртесси тата государствăна тырă парасси çинчен йышăннă постановленине кашни колхозникпе колхозницăна татах та татах ăнлантарса памалла. Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра тырпулсене пухса кĕртессишĕн, государствăна тырă парса татассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле.

В. РЗАЙ.
(Хамăр корр.).

Комбайнер Михайлов 250 гектар вырса пухнă

Çĕмĕрле МТС-ĕнчи паллă комбайнер И. И. Михайлов юлташ (вăл Етĕрне МТС-ĕнчи Токсубаев комбайнерпа ăмăртать) сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕр комбайнпа 250 гектар вырса пухнă. Хăй çине илнĕ обязательствăна Михайлов юлташ фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра тултарассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Çĕртме тума кирлĕ пек тытăнман

МУРКАШ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕрхи çĕртме туни тырпул тухăçне ÿстерес ĕçре пысăк вырăн йышăннине кунта пĕлеççĕ, анчах та ĕçе пĕр колхозра та пикенсе тытăнман-ха. Туллимар даннăйсем тăрăх, сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне кунта кĕрхи çĕртме пурĕ те 72 гектар çеç тунă. Киров ячĕпе тăракан колхоз 22 гектар сухаланă, ку вара çак енĕпе чи малта пыракан колхоз шутланать, ытти колхозсем 2—3-шер гектар кăна тунă.

Районра ытти ĕçсемпе малта пыракан «Крестьянин», Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем те çĕртме тума кирлĕ пек пуçăнман. Уйрăмăнах кунта Кашмашри «Свобода» колхоз ĕçĕ тĕлĕнтерет. «Свобода» колхоз, вăрлăх акса тăвакан колхоз пулнă май, государство валли тырă инçете турттармасть. Кунта 58 лаша. Ыраш акса пĕтернĕ. Шутласан, кĕрхи çĕртме ĕçĕ хĕрсех пымалла. Анчах кунта паянхи кун тĕлне нимĕн те туман. Колхоз председателĕ Петровский юлташ, колхозри уйрăм çитĕнÿсем çине кăтартса, çĕртме тума ĕлкĕрĕпĕр-ха, тесе ларать.

Тÿррипе каласан, кунта район руководителĕсем те колхозсене ытлах васкатмаççĕ. Çĕртме тумалли плана колхозсем райçĕрĕç пайĕнчен августăн 22—25-мĕшĕсенче кăна илнĕ.

Т. ИВАНОВ.

ГОСУДАРСТВĂНА — ÇĔРУЛМИ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Уйри тырпулсене вырнипе тата кĕлтесене турттарса капана хывнипе пĕрлех чылай колхозсем çĕрулми кăларма тытăнчĕç. Чи малтан кăларнă лайăх çĕрулмине колхозсем государствăна параççĕ. «Урожай», «Металлист», «Пучах» колхозсем государствăна çĕрулми памалли плана 50 процент ытла тултарнă та ĕнтĕ. Çавăн пекех Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз государствăна 120 пăт çĕрулми, 15 пăт кишĕр панă.

Çар çыннисен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекенсен канашлăвĕ

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче Шупашкарта райсовет исполкомĕсен çар çыннисен çемйисене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен отдел заведующийĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. [illegible] Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕн заместителĕ Киреев юлташ доклад туса пачĕ.

[illegible]

[illegible] çар çыннисен çемйисене тума 3.500 гектар ытла çĕр уйăрса панă, продуктсем, [illegible] «Красный пахарь» колхоз [illegible]

[illegible] примерĕпе, фронтовиксен çемйисене [illegible] 1893 [illegible] фронтовиксен çемйисене пулăшас фонда 718 пин тенкĕ ытла укçа пуçтарнă. [illegible]

Анчах та, çар çыннисен çемйисене пулăшас ĕçре [illegible]

[illegible] ВКП(б) Чăваш обкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ [illegible]

[illegible] Канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Андреев, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев тата ыттисем те пулчĕç.

Елчĕк районĕнчи больница вăрçă вăхăтĕнче

Отечественнăй аслă вăрçă халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем умне те, вăл шутра халăх сывлăхне сыхлас ĕçри работниксем умне те, ответлă задачăсем лартрĕ. Вăрçă медицина работникĕсемшĕн йывăр тĕрĕслӳ пулса тăчĕ. Медицина работникĕсем çав тĕрĕслеве фронтра та, тылра та тивĕçлипе тӳссе ирттереççĕ. Вĕсем хуласемпе ялсенчи поликлиникăсенче, больницăсенче, врач участокĕсенче, фельдшерсемпе акушеркăсен пункчĕсенче ĕçлесе, ĕççыннисен сывлăхне сыхлаççĕ, халăх хушшинче чир-чĕр сарăлассинчен сыхланмалли ĕçсене пурнăçа кĕртеççĕ.

Пуриншĕн те паллă, медицина учрежденийĕсем лайăх ĕçлетчĕр тесен, квалификациллĕ кадрсем тата вăл кадрсем хăйсен ĕçне паракни, тимлĕн тăрăшни кирлĕ. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн Елчĕк районĕнчи больницăра ĕçлекенсенчен çуррине яхăн Хĕрлĕ Çар ретне кайнă, çапла вара вĕсем вырăнне çĕнĕ çынсем хутшăннă.

Хальхи вăхăтра больница коллективĕнче 34 çын шутланать. Кăçалхи çул 10 çын отличниксен ятне, 20 çын ударниксен ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Акă медицина сестрине З. Н. Федорова юлташа илер. Вăл пирĕн больницăра 18 çул ытла ĕçлет. Ăна колхозниксемпе колхозницăсем хăйĕн ĕçне лайăх пĕлнĕшĕн, тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн юратаççĕ. Федорова юлташ хăйĕн çумне çирĕплетнĕ «Осоавиахим» колхозра тасалăхшăн кĕрешет, ачасен сывлăхне тăтăшах тĕрĕслет, колхозниксем хушшинче калаçусем ирттерет. Çав вăхăтрах вăл больницăра профсоюз комитечĕн председателĕ пулса ĕçлесе, коллектива умри задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме мобилизацилет. Фельдшер А. А. Семенова, хирурги енĕпе ĕçлекен сестра Ф. П. Данилова, няня Е. Садикова, М. А. Ястребова тата хуçалăх заведующийĕ М. Владимирова юлташсем те яланах лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсен профессине лайăх вĕренсе çитнĕ, пур ĕçе те тирпейлĕ тата вăхăтра тăваççĕ. Çав вăхăтрах обществăллă ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

Пирĕн больница коллективĕ вăрçă вăхăтĕнче халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕ. Вăрçă кунĕсенче халăх хушшинче санитари пропагандине вăйлатмалла пулчĕ. Калас пулать, çак задачăна пирĕн коллектив начар мар пурнăçа кĕртсе пырать. Больницăри пур врачсемпе сестрасене те ялсем çумне çирĕплетнĕ. Вĕсем ялсенче, колхозниксем патĕнче час-часах пулаççĕ, медицина ыйтăвĕсемпе калаçусем ирттереççĕ. Кăçалхи çул кăна врачсемпе сестрасем 67 çĕре тухса çӳренĕ, ялсенчи санитари уполномоченнăйĕсем валли 100 хут ытла семинарсем ирттернĕ, ĕççыннисем хушшинче 115 хутчен калаçусем ирттернĕ. Ерекен чирсенчен сыхланас тĕлĕшпе тумалли ĕçсен планне пурнăçа кĕртнĕ. Райсовет исполкомĕ йышăннă тăрăх, 56 ялти 217 урама, колхозсен пĕрлешӳллĕ 156 килкартине, колхозниксен 7.215 килçуртне тасатса йĕркене кĕртнĕ. Çăлсене тасалăх тĕлĕшĕнчен йĕркене кĕртес енĕпе сахал мар ĕçленĕ.

Больница работникĕсем ачасен сывлăхне сыхлас енĕпе тимлĕн ĕçлеççĕ. Кăçал кăна 13 шкулти ачасене тĕрĕслесе тухнă. Тĕрĕсленĕ чухне хăшпĕр шкулсенче ачасем классенче те çиелти тумтирсемпе ларнине, тирпейсĕрлĕх пуррине тата ытти çитменлĕхсене палăртнă. Вĕсене пĕтерме пулăшас шутпа калаçусем ирттернĕ, шкулсенче санитари посчĕсем организациленĕ. Асăннă ĕçсенче фельдшерсем Ястребова, Федорова, Данилова, Семенова, Ефимова юлташсем палăрчĕç.

Районри больницăри тата врачсен пункчĕсенчи работниксем санитари ĕçне тата чирсенчен сыхланас ĕçе йĕркеленĕ чухне ялти санитари уполномоченнăйĕсем çине таянса ĕçлеççĕ. Санитари уполномоченнăйĕсемпе инспекторсен ретĕнче 475 çын ытла шутланать. Вĕсенчен ытларахĕшĕ хăйсен ĕçне юратса туса пыраççĕ. Çапла, Лаш-Таяпа ялĕнчи инспектор Яковлева, Уразметева, Муллина тата ытти инспекторсем кулленех килрен-киле çӳренĕ, хăйсен участокĕнчи ĕçсем çинчен медицина работникĕсене çийĕнчех пĕлтĕрсе тăраççĕ.

Вăрçă çулĕсенче больница чирленĕ çынсене пулăшу парас тата сыватас тĕлĕшпе те хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатрĕ. Больница çумĕнче амбулатори, операцисем тăвакан отделени, тĕрлĕ сăнавсем тумалли лаборатори, ача çуратмалли тата ытти отделенисем те пур. Вĕсен ĕçне чирленисене çийĕнчех пулăшу парас май организациленĕ. Çавна пула ерекен чирсемпе чирлекенсен тата вилекенсен хисепĕ нумай чакнă. Больница коллективĕ тата районри медицина работникĕсем кĕçĕ чирне пĕтерес тĕлĕшпе яланах тимлĕн ĕçлеççĕ. Кĕçĕ чирне пĕтерме вĕрентес шутпа медицина сестрисемпе икĕ хутчен семинарсем ирттернĕ, ялсоветсемпе колхоз председателĕсем тата учительсем валли лекцисем, колхозниксем валли калаçусем ирттернĕ. Кĕçĕ чирне пĕтерес ĕçре нумай çĕнĕ йышши эмелсемпе усă курнă. Çапла вара, тĕпрен илсен, кĕçĕ чирне пĕтернĕ теме пулать. Халĕ медицина работникĕсем вăл чире тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ.

Трахома чирне пĕтерес тĕлĕшпе районра 45 çĕрте трахома пункчĕсем, 5 çĕрте фельдшерсен пункчĕсем, районри больницăра куç чирĕнчен сыватакан кабинет, стационар, трахоматорий ĕçлеççĕ. Юлашки вăхăтра трахома чирне пĕтерес енĕпе сахал мар ĕçленĕ, анчах та çителĕклĕ теме çук-ха. Çак ответлă ĕç çителĕксĕр пулса пыни районра куç чирĕнчен сыватас тĕлĕшпе ĕçлекен квалификациллĕ врач пулманнинчен нумай килет. Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн пире врач тупса парас ыйтăва çывăх вăхăтрах татмалла.

Больница çумĕнчи амбулаторире (унта пурĕ виçĕ çын ĕçлет) кăçал ултă пин çын ытла пулнă. Вĕсене пурне те тивĕçлĕ пулăшу панă.

Партипе совет организацийĕсем пулăшнипе, больница коллективĕ больница хуçалăхне çĕклес енĕпе чылай ĕçсем тăвать. Больницăн подсобнăй хуçалăхĕ иртнĕ çулта пахча-çимĕçсем 5 гектар çине акса тунă пулсан, кăçал 14 гектар çине акнă. Ленин ячĕпе тăракан, «Марс», «Осоавиахим» тата ытти колхозсем пулăшнипе пахча-çимĕçсене пуçтарса кĕртес ĕç ăнăçлăн пырать. Колхозсем пулăшнипе больницăра выртакансене апат çитерессине те начар мар организациленĕ. Больница коллективĕн вăйĕпе вутăпа торф хатĕрленĕ. Ăна турттарса тухма колхозсем пулăшаççĕ. Больница хуçалăхне юсас енĕпе тата нумай ĕçсем пурнăçа кĕртмелле-ха. Çуртсене юсас пулать, пӳлĕмсенче çутма кирлĕ хатĕрсене çителĕклĕ тупмалла. Ку тĕлĕшпе эпир Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариатĕнчен пулăшу кĕтетпĕр.

Пирĕн больница ĕçĕнче çитменлĕхсем чылай-ха. Анчах партипе совет организацийĕсем, колхозсем тата ялти актив пулăшса пырсан, эпир, медицина работникĕсем, вăл çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме пултаратпăр. Пире, медицина работникĕсене, хамăрăн ĕçе кăтартуллăн туса пыма партипе правительство халăх сывлăхĕшĕн куллен тăрăшни, мухтавлă Хĕрлĕ Çар чаплă çĕнтерӳсем туни хаваслантарать.

Е. КОМИССАРОВА,
Елчĕк районĕнчи больница заведующийĕ.

Районри хаçатсенчен

Колхозниксем хăйсен ĕнисемпе кĕлте кӳреççĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. Тури Туçари Чкалов ячĕпе тăракан колхозра тырпулсене пухса кĕрес ĕçре ĕнесемпе тата вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. Колхозăн пĕрлештернĕ выльăхĕсенчен 24 ĕнепе вăкăра кӳлме вĕрентнĕ. Вĕсемпе пуринчен ытларах шкул ачисем ĕçлеççĕ. Çакăнпа пĕрлех колхозниксен ĕнисемпе те усă кураççĕ. 63 çулхи Д. Мулюков хăйĕн килĕнчи ĕнипе ĕçлесе колхоз тырпулне вăхăтра пухса кĕме пулăшать. 8 кун хушшинче вăл 10 гектар çинчи тырра колхоз итемĕ çине турттарнă тата государствăна 100 пăт ытла тырă леçсе панă. Çапла вăл кĕске вăхăт хушшинчех 195 ĕçкунĕ тата 26 килограмм тырă ĕçлесе илнĕ.

А. Сагутский колхозник та хăйĕн ĕнипе ĕçлесе колхоза пысăк пулăшу парать.

(«Коммунизм байрагы»).

Кĕлтесене алăпа йăтса капана хыврĕç

ЕТĔРНЕ. Полянкăри Киров ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тырăсене (417 гектар) районра чи малтан вырса пĕтерчĕ. Çак ялти шкулăн учителĕсем, шкул директорĕ Т. Яковлев юлташ ертсе пынипе, кĕлтесене алăпа йăтса капана хывас ĕçе пуçарчĕç. Августăн 19-мĕшĕнче колхозниксемпе учительсем, уйхире йышлăн тухса, 50 гектар çинчи кĕлтесене йăтса капана хывнă.

Ĕçĕн ăнăçлăхне шута илсе, колхозниксем августăн 20—21-мĕш кунĕсенче 136 гектар çинчи кĕлтесене йăтса капана хывнă.

(«Колхозник юлташĕ»).

Фельетон вырăнне

Хушаматне кура—ĕçĕ...

Цирульник вырăс чĕлхинче авалхи сăмах шутланать. Пирĕн чăваш чĕлхине куçарсан, ăна çӳç касакан е сухал хыракан теме пулать. Паллах, кашни çын цирульник пулма пултараймасть, вăл ĕçе тума мастерлăхпа пĕрлех çаврăнăçулăх тата ытти те кирлĕ. Анчах та сухалне хыртарма е çӳç кастарма пынă çын лайăх пĕлет: вăл хăйĕн питсăнне пĕтĕмпех цирульник аллине парать. Çавна пула вара, леш ăнсăртран çивĕч бритвăпа ӳте кассан е хачă вĕçĕпе тăрăнтарса илсен, «каçарăр» тенипех иртсе каять. Вырăссен паллă писателĕ Гоголь каланă тăрăх, авал пĕр цирульник пĕрин сăмсине те касса илнĕ тет...

Анчах кунта пирĕн сăмах цирульник çинчен мар, Цирульникова хушаматлă çын çинчен çеç пырать. Хăш чухне хушамат та çынăн ăсталăхне кăтартать. Сăмахран, Кузнецов, Плотников е ытти çавăн пек хушаматлă çынсен ашшĕсем е аслă ашшĕсем çав мастерлăха тĕплĕн пĕлнĕ, теççĕ. Цирульниковăн вара ашшĕ те аслашшĕ те цирульник пулман, теççĕ. Хăй те вăл çӳç тавраш касма пĕлмест. Вăл счетовод. Чурачăк районĕнчи Вăрманкасри «Новая сила» колхозра пĕр уйăх каялла ĕçлеме тытăннă. Анчах та вăл колхозри учетпа отчетноçа лайăх лартнипе мар, колхоз пурлăхне лайăх хырма пĕлнипе кĕске вăхăтрах чапа тухнă. Унăн хăйĕн ĕне пур, анчах та хăйĕн ĕне сĕтçăвĕ ăна çитмест, вăл фермăран час-часах çу «хырать». Колхоза урипе тин кăна ярса пуснă, анчах 2 пăт çăнăх илме те ĕлкĕрнĕ. Колхоз çĕрулмине никамран ирĕк илмесĕрех, хăй пахчинчен кăларнă пек, кăларса çиет.

— Çитĕр-ха вăл, — тет Васильева колхозница,—колхоз канцелярийĕнче те сахал пулать пĕт-ха хăй... Акă, августăн 16-мĕшĕнче вăл колхоз правленине ярса та пусмарĕ. Ыраш акмалла, никам та складран ыраш пама распоряжени çыракан çук. Çапла вара ыраша распоряженисĕрех хире ăсатрăмăр...

Эпир калаçнине итлесе тăнă чух ВКП(б) райкомĕн уполномоченнăйĕ Федоров юлташ вара çапла каларĕ:

— Вăл хушаматне тивĕç ĕçлет, колхоза хырать те хырать...

Çапла вара, эпир «Новая сила» колхоз счетовочĕн Цирульниковăн хушамачĕ мĕне кăтартнине пĕлтĕмĕр. Вăл колхоза лайăх хырма пĕлнĕрен Цирульникова хушаматлă иккен.

В. ЯСТРЕБОВ.

Болгарири лару-тăру

Болгарири çĕнĕ правительствăн декларацийĕ

СОФИЯ, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Болгарин премьер-министрĕ Коста Муравиев Софири радио тăрăх правительствăн çак декларацине вуласа панă:

Граждăнсемпе гражданкăсем! Правительство пирĕн çĕршыв тӳссе ирттерекен чи ответлă тапхăрта власть пуçне тăчĕ. Правительство Болгари халăхĕ нихăçан та ырламан политикăна пĕтерсе лартма шут тытрĕ. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесе, правительство çапла йышăнчĕ:

1. Болгари халăхĕн мĕнпур демократиллĕ ирĕклĕхĕсемпе прависене, ирĕклĕ халăха тивĕçлĕскерсене, çĕнĕрен законлă туса хумалла.

2. Правительство çапла пĕлтерет: вăл Болгари гражданĕсене, вĕсем мĕнле наци иккенне тата мĕнле тĕн тытса тăнине пăхмасăр, пурне те çĕнĕрен пĕртан правалла туса хурĕ.

3. Правительство Болгари халăхĕн конституцире палăртнă ирĕклĕхĕсемпе прависене пурне те çĕнĕрен законлă туса хума йышăнчĕ.

4. Правительство Болгарири диктаторла режима хирĕç тата Германипе союзлă пурăнас политикăна пурнăçа кĕртсе пынă влаçсене хирĕç кĕрешнĕ мĕнпур çынсене пĕтĕмпех каçарма йышăнчĕ.

5. Правительство ют çĕршывсенчен пулăшу илсе тăракан тата Болгари халăхĕн интересĕсемпе йăлисене хирĕç пыракан мĕнпур фашистла организацисене салатса яма йышăнчĕ.

6. Правительство Болгарире çакăн пек лару-тăру пулса тăнăшăн ответлă пулса тăракан 25-мĕш созыври Халăх пухăвне салатса ярать.

7. Финанс политики тĕлĕшпе правительство государство укçине перекетлемешкĕн хытă йĕрке туса хурĕ, халăх пурлăхне çаратассине пĕтерсе лартĕ.

8. Экономика тĕлĕшпе правительство халăха апат-çимĕç тата пурне те кирлĕ япаласем пама питĕ хытă тăрăшĕ, çав япаласене тĕрĕс валеçсе тăмалла тăвĕ.

Тулашри политика тĕлĕшпе:

1. Болгари çирĕп нейтралитет, ытти çĕршывсем ĕненме пултаракан нейтралитет тытса пыма сăмах парать. Çав нейтралитета ырă кăмăлпа пурнăçа кĕртмешкĕн Германин Болгари çĕрĕ çине пырса кĕрекен мĕнпур çарĕсене, çавăн пекех тата Болгари территорийĕнчи çарĕсене хĕçпăшалсăрлантарма тăрăшĕ. Çак ĕçе тунă чухне Германи мĕнле те пулин кансĕрлес пулсан, Болгари правительствин Германипе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахмалла пулать.

2. Болгари правительстви паянтан вара виçĕ çĕршывăн пактне пăрахăçа тухнă тесе шутлать. Правительство тата Коминтерна хирĕç тунă пакта пăрахăçа кăларать.

3. Англипе Америкăна хирĕç вăрçакан çĕршыв шутĕнчен тухас тĕлĕшпе халь тăвакан ĕçсене правительство ырлать, çав çĕршывсене хирĕç Болгари халăхĕ нихăçан та вăрçасшăн пулман. Правительство мир тăвасси çинчен часрах калаçма пуçлама тăрăшать.

4. Правительство Болгарин экспедициллĕ корпусне каялла куçарса килет, çак ĕçе çитес кунсенчех туса пĕтерет.

5. Правительство ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсемпе çĕнĕрен дипломатиллĕ çыхăнма тăрăшĕ.

6. Правительство хамăрпа кӳршĕллĕ Турципе туслăн çыхăнса тăнине малашне те çирĕплетсе пырĕ.

7. Правительство кӳршĕри çĕршывсен халăхĕсемпе тата правительствисемпе яланхи пек çыхăнса тăма пуçлама йышăнчĕ.

Правительствăн тĕп задачисенчен пĕри— тăванла Российăпа чи ырă кăмăлпа çыхăнса тăрассине, пĕр-пĕрне шанса çыхăнса тăрассине малалла ӳстерсе пырасси пулать. Çав çыхăнусем вĕсем пĕр-пĕринпе ялан туслă пурăнас еннелле, ирĕке тухнă çĕршыв хăйне ирĕке кăларнă çĕршывпа мĕнле çыхăнса тăма тивĕçлĕ—çавăн пек çыхăнса тăрас еннелле ытларах та ытларах улшăнса ӳссе пырĕç.

Çак программăна пурнăçа кĕртес тесе, правительство пĕтĕм Болгари халăхне, политикăллă шухăшсем тĕрлине пăхмасăр, правительство тавра пĕтĕçме тата Болгари интересĕсем майлă пыракан çак программăна пурнăçа кĕртес ĕçре правительствăна пулăшма чĕнет.

БОЛГАРИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВĂН ДЕКЛАРАЦИЙĔ ПИРКИ ТАСС АНЛАНТАРСА ПАНИ

Çакна йышăнасах пулать: Болгари правительстви шалти политика ыйтăвĕсем пирки формальнăй йĕркепе калани—пăртак малалла шуни пулса тăрать. Паллах ĕнтĕ, сăмах панисĕр пуçне халлĕхе урăх нимĕн те туман-ха тата çав панă сăмаха хăçан пурнăçласси те паллă мар-ха. Анчах шалти политикăна лайăхлатас тĕлĕшпе панă çав сăмах та ĕнтĕ малалла кайни пулса тăрать.

Анчах та вăрçă условийĕсенче тулашри политика кирек хăçан та шалти политикăран малта тăрать. Кунта вара ирĕксĕрех çапла калама тивет: Муравиев премьерăн декларацийĕ тулашри политика тĕлĕшпе Багрянов правительствин позицийĕнчен пĕртте лайăх мар.

Муравиев правительстви пĕр-пĕрне вĕлермелле çапăçакан икĕ лагерь хушшинче çирĕп нейтралитет тытса пырасшăн. Анчах та практика çакна кăтартса пачĕ: Болгарин нейтралитет политики халлĕхе Германишĕн çеç усăллă. Вăл Германин темиçе çĕр карапне тата темиçе пин салтакне Хĕрлĕ Çартан пытарса усрама çеç пулăшать. Вăл нимĕçсене Болгарин Хура тинĕсри порчĕсенче хăйсен подводнăй лодкисем валли базăсем тума тата пĕтĕм Хура тинĕсре совет парохочĕсене çӳрессине хăратса тăма май парать.

Болгарин çак нейтралитет политики нимĕçсен хĕçпăшаллă вăйĕсене Болгари территорийĕнче пытарса тăрассинчен пуçне урăх нимĕн те параймасть пулсан, çав политика çуралнинчен çуралманни лайăхрах пулать. Болгарие çăлса хăварас тесен, нейтралитет политикинчен Германипе çыхăнма пăрахас политика çине, Германие хирĕç кĕрешекен коалицин лагерĕ çумне хутшăнас политика çине куçас пулать. Болгарин нимĕçсем майлă ĕçлесе тăнă пуçлăхĕсем сĕтĕрсе кĕртнĕ путлăхран ăна çăлса кăларма пултаракан пĕртен-пĕр май вăл — çавăн пек туни пулать, анчах та пуртăданнайсем те çакăн çинчен калаççĕ: Муравиев правительстви çав пĕртен-пĕр мая пурнăçа кĕртме пултараймасть.

Е нейтралитет политикине пăрахса, Германие хирĕç кĕрешекен демократиллĕ çĕршывсен лагерĕ çумне хутшăнмалла, е малашне те нейтралитет тытса тăмалла; юлашки пек тусассăн вара Болгари кунçулĕшĕн Болгарин хальхи пуçлăхĕсен ответ тытмалла пулать. Ыйту çавăн пек тăрать.

ИТАЛИРИ СОЦИАЛИСТСЕН ПАРТИЙĔН КОНГРЕСĔ УÇАЛНĂ

РИМ, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Неаполь хулинче Италири социалистсен партийĕн пĕрремĕш национальнăй конгресĕ уçалнă. Пĕтĕмĕшле политика çинчен парти секретарĕ Пьетро Ненни доклад тунă. Вăл республика майлă тăракан мĕнпур вăйсене учредительнăй пухăва ирттерме анлăн пĕрлешме чĕннĕ. Докладчик Италири коммунистсен партийĕпе тунă килĕшĕве питĕ пысăка хурса хакланă, унтан вăл çапла каланă: христиан-демократсен партийĕ хăй республикăшăн тăрасси çинчен пĕлтерсен, христиан-демократсен партийĕпе те килĕшӳ тума тивĕçлĕ, тенĕ.

ФРАНЦИПЕ БЕЛЬГИРИ ТАТА ИТАЛИРИ ВĂРÇА ĔÇĔСЕМ

Союзниксен çарĕсем Антверпен хулипе Лилль хулине ирĕке кăларнă

ЛОНДОН, сентябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Антверпен хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен механизациленĕ çарĕсем Бельги тăрăх икĕ кун хушши пырса, сентябрĕн 4-мĕшĕнче Антверпен хулине кĕрсе кайнă, каçхине доксен районне тăшмантан тасатнă. Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Лувен, Малин тата Ало хулисене туртса илнĕ. Франципе Бельги чикки çывăхĕнче кĕрешекен ытти соединенисем Лилль хулине туртса илнĕ. Сомма шывĕнчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем малалла куçса пынă, Эден, Монтрейль тата Этапль хулисем патне çитнĕ.

Союзниксен çарĕсем Бельгире Монсĕ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пысăк «миххе» кĕрсе ӳкнĕ нимĕç çарĕсене пĕтерсе тăкнă. 9.000 çынна тыткăна илнĕ. Турнэ хулинчен кăнтăртарахра тата Валансьенран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Маршьен хули районĕпе Моноран çурçĕр-хĕвеланăçнерехри Виллеро хули районĕнче союзниксен çарĕсем тăшманăн вырăнти «михĕсене» кĕрсе ӳкнĕ чаçĕсене пĕтерсе пынă.

Шарлеруа хулинчен кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Флоренпа Бомон хулисем патне çитнĕ. Маас шывĕн тури улăхĕнче союзниксен çарĕсем Сен-Минэль хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçнă. Фронтăн кăнтăр енчи участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Сентябрĕн 4-мĕшĕнче, çанталăк начар тăнă пирки, союзниксен авиацийĕ вăйлах кĕрешеймен.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, сентябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Американецсемпе французсен 7-мĕш армири çарĕсем Лион хулине виçĕ енчен хупăрласа илеççĕ, тăшманăн çурçĕрелле чакмалли çулĕсене тытса илессипе хăратса тăраççĕ. Рона шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче Лион хулинчен пĕр виçĕ миля кăнтăртарахра тăшман американецсен малти отрячĕсене хирĕç тăма пуçланă. Вьенн хулине союзниксем йышăннă. Лион хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Эн шывĕ урлă каçнă та тăшманăн Рона шывĕн улăхĕнчи тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле, Бур-Ан-Бресс еннелле чакмалли çулĕсене хӳтĕлесе тăракан çарĕсемпе çапăçма пуçланă. Рона шывĕнчен хĕвеланăçнерехре француз çарĕсем, Сент-Этьен хулинчен иртсе кайса, хăвăрт малалла куçса пынă, тăшман вĕсене хирĕç тăман. Француз çарĕсем Серьер тата Монфскон хулисене тытса илнĕ те Лион патне пырса çитнĕ.

Фронтăн хĕвелтухăç флангĕнче Америка çарĕсем Монако хули таврашне çитнĕ.

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ сентябрĕн 4-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Францире кĕрешекен 7-мĕш армин малти отрячĕсем Лион хулине кĕнĕ, вара çак хуларан çурçĕрелле тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелле чылай малалла куçнă. Франци çарĕсен чаçĕсем Лион хулинчен 15 миля çурçĕртерехре ларакан Вильфранш хули патне çитнĕ.

Италире союзниксен çарĕсем фронтăн икĕ флангĕнче те çаплах малалла куçса пыраççĕ. «Гот линине» Пезаро хулинчен пуçласа 32 километр шалта выртакан пункт патне çитиччен пĕтĕмĕшпех 8-мĕш арми туллин контроллесе тăрать. Уйрăм секторсенче 8-мĕш арми чаçĕсем 20 километр таран шалалла кĕрсе кайнă.

Союзниксен авиацийĕ çапăçусен районĕсенче тата Çурçĕр-хĕвеланăç Италире кĕрешнĕ.

БЕРНАРД ПРИНЦА ГОЛЛАНДИН ШАЛТИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИЙĔ ПУЛМА ЛАРТНĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: принц Бернарда Голландин шалти хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ пулма лартнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ БЕЛГРАД РАЙОННЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕн хисепĕнче тăракан йывăр бомбардировщиксем сентябрĕн 3-мĕшĕнче Белград районне тапăннă.

Чкаловски районра вутă хатĕрлеме васкамаççĕ

Хĕл çывхарса килет. Хĕллехи вăхăтра ăнăçлăн ĕçлесси хĕле тĕплĕн хатĕрленнинчен килет. Çуртйĕрсене халех юсаса ăшăтмалла, хĕл валли вутă хатĕрлемелле. Çак кирлĕ ĕçе Чкаловски районри чылай предприятисемпе учрежденисен руководителĕсем тивĕçлипе хакламаççĕ-ха.

Çу завочĕ иртнĕ çулта та вутă çителĕклĕ пулманнипе сахал мар чăрмавсем тӳснĕ. Анчах завод директорĕ Мифтахудинов юлташ çавăн çинчен манса кайнă пулас, вутă хатĕрлес ĕçе кăçал та кирлĕ пек организацилемен. Чапаев ячĕпе тăракан промысла артель председателĕ Дергунов юлташ та çав ĕçе тума васкамасть.

Районра шкулсем, культура тата медицина учрежденийĕсем валли вутă хатĕрлесси хытă юлса пырать. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех ялсовет председателĕсен тимсĕрлĕхĕнчен килет. Чăваш Ишек, Иккĕмĕш Чкаловски тата ытти ялсоветсем паян куна çитсе те вăл ĕçе тивĕçлипе тытăнман. Çавăнпа та вутă кирлĕ хисепрен çуррине те хатĕрлемен. Уйрăмăнах турттарасси юлса пырать.

Вăхăт кĕтмест. Чкаловски район руководителĕсен районри предприятисемпе учрежденисем, шкулсем валли вутă çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе халех татăклă мерăсем йышăнмалла.

М. КОШКИН.

Халăх геройĕ

(В. И. Чапаев герой вилĕмĕпе вилни 25 çул тултарнă тĕле)

1919 çулхи сентябрĕн 5-мĕшĕнче граждăн вăрçин халлапри пек геройĕ Василий Иванович Чапаев вилнĕ.

Çĕрле тăшман Чапаевăн Лбищенск хулинчи штабне сасартăк пырса тапăннă. Красноармеецсем питĕ паттăррăн çапăçнă. Анчах та вĕсен вăйĕсем тăшманăннинчен нумай сахалтарах пулнă. Тăшман çав тери хаяррăн хĕссе пынă. Чапаева амантнă. Юн нумай кайнă пирки, вăл вăхăчĕ-вăхăчĕпе сасартăк тăнсăр пулса тăнă, анчах та команда пама пăрахман. Лбищенск хулине хӳтĕлекенсем халран кайсан, Чапаев вĕсене Урал шывĕ патне чакма хушнă. Красноармеецсем хăйсем юратнă дивизи начальникне майĕпен чăнкă çыранран шыв патне антарнă. Чапаев ишсе кайнă, унăн юлташĕ Петр Исаев (Чапаев хушнине кирлĕ вырăна çитерсе тăнăскер), пулеметпа персе, çав каçă вырăнне хӳтĕлесе тăнă. Тăшман Урал шывĕ çине питĕ вăйлăн персе тăнă. Пульăсемпе снарядсем ӳкнипе шыв вĕренĕ пекех пăлханса тăнă. Шывăн тепĕр енне ишсе каçмалли нумаях та юлман, анчах та çав вăхăтра Чапаева тепĕр хут амантнă. Чапаев вара халран кайнă та шыва путнă.

Дивизин станицăсенче тăнă полкĕсем тăшман Лбищенска тапăнни çинчен илтсен, çавăнтах Лбищенск патне тухса кайнă. Тăшмана Лбищенск хулинчен хăваласа кăларнă та дивизин юратнă начальникне шырама тытăннă. «Чапай» вилнĕ тенине никам та ĕненесшĕн пулман (Василий Ивановича боецсем Чапай тесе чĕннĕ). Чапаев çинчен вĕсем чĕрĕ çын тесе çеç шухăшлама пултарнă. Чапаев вăл чăнах та вĕресе тăракан вăй, çапăçури хастарлăх, ывăнма пĕлмен çын пулнă.

Халăх хушшинче Чапаев çăлăнса юлнă та Урал шывĕн тепĕр енне ишсе каçнă текен легенда çуралса тухнă. Çак легенда питĕ кăтартуллă легенда. Халăх телейĕшĕн хăйне хăй шеллемесĕр çав тери паттăррăн çапăçакан çын нимĕнсĕрех вилсе выртма пултараймасть. Вăл халăх асĕнче ĕмĕр пурăнать.

Василий Иванович Чапаев хăй тĕллĕн çитĕнсе ӳснĕ çав тери чаплă çар руководителĕ пулнă. Вăл 1887 çулта Шупашкар уездĕнчи (халĕ Чăваш АССР-ĕ) Будайка ялĕнче çуралнă. Унăн çемьи каярахпа Атăл хĕрринчи Балаково ялне куçнă.

Унăн ашшĕ ытти çĕре кайса каскаласа çӳренĕ. Анчах та çав çавах нушалăхран тухайман. Унăн ывăлĕ, кайран граждан вăрçин геройĕ пулса тăнăскер, ун чухне шкула та çӳреме пултарайман, мĕншĕн тесен унăн урана тăхăнмалли те, тумтир те пулман. Чапаев пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче çеç, окопсенче çеç лайăх вулама вĕреннĕ.

Вунултă çула çитсенех, Чапаев хăйĕн пиччĕшĕсемпе пĕрле каскалама пуçланă. Алла пуртă тытса, вĕсем Атăл леш енчи хуласемпе ялсем тăрăх, Урал çывăхĕнчи казаксен станицисем тăрăх çӳренĕ, вĕсем нумай çурт лартнă, нумай çӳренĕ, рабочисемпе хресченсен пурнăçне лайăх пĕлсе çитнĕ. Вырăссен чаплă Атăл шывĕ, хăватлă çутçанталăк сăнарĕсем, вĕçĕ-хĕррисĕр çеçенхирсем телей çинчен шухăшлаттарнă. Степан Разин тата Емельян Пугачев çинчен хывнă юрăсемпе калавсем — халăха пусмăрлакансене хирĕç кĕрешесси çинчен шухăшлаттарнă. Çав условисенче ĕнтĕ халăхăн пулас геройĕн ырă кăмăлĕпе шухăшĕсем çитĕнсе, йĕркеленсе пынă.

... 1909 çулта Чапаева çара илнĕ. Унтан вăл унтер-офицер пулса таврăннă. 1914 çулта ăна мобилизациленĕ те фронта янă. Нимĕçсемпе çапăçса, Чапаев тĕрекленнĕ, çитĕннĕ. Питĕ йышлă çапăçусенче чаплă ĕçсем тунăшăн командовани ăна пур тăватă степень Георгиевски хĕрессемпе те наградăланă тата подпрапорщик чинне панă.

1917 çулхи февральти революци вăхăтĕнче Чапаев Саратоври госпитальте выртнă, Октябрьти революци вăхăтĕнче — Николаевскра (хальхи Пугачевскра) пурăннă. Совет влаçне çирĕплетессишĕн кĕрешмелли кунсем килсе çитнĕ. Халăхăн шанчăклă ывăлĕ пулса, вăл большевиксен партине кĕнĕ, рабочисемпе хресченсен тата салтак депутачĕсен Николаевск уездĕнчи съездĕнче ăна президиума суйланă. Николаевск хули Чапаевăн, çак ăста организаторăн тата нимрен хăраман руководителĕн малтанхи ĕçĕсене курса тăнă. Чапаев вырăнти контрреволюционерсен, совет влаçне хирĕç восстани тума шутланăскерсен, планĕсене путлантарса лартнă, Большая Глушица ялĕнчи контрреволюциллĕ пăлхава пусарса лартнă.

Контрреволюциллĕ пăлхавсем уездра ытти вырăнсенче те сике-сике тухнă. Анчах та Чапаевăн хăй тунă, хăй ертсе пыракан красногвардейски отрячĕ пур çĕре те пырса çитнĕ, пур çĕрте те халăх тăшманĕсен выступленийĕсене пусарнă. Чапаевăн чапĕ куллен кун ӳсе пынă. Унăн отрядне çĕнĕ те çĕнĕ çынсем хăйсен ирĕкĕпе вуншарăн та çĕршерĕн пынă.

1918 çулта Дутов генералăн контрреволюциллĕ çарĕсем Самарăна тытса илме кайнă. Дон шывĕпе Кубань шывĕ граждăн вăрçи хуранĕнче пулса тăнă. Германи çарĕсем Украинăна пырса тулнă. Чапаев çамрăк совет республикин йышлă фрончĕсенчен килекен хыпарсене питĕ тимлĕн итленĕ. Вăл нимĕç оккупанчĕсем çинчен вĕсене кураймасăр, çиленсе калаçнă, вĕсене вăл тĕнчери пĕрремĕш вăрçăрах Неман шывĕ çинче пĕр шеллемесĕр ăшаланă.

— Çăтса яраймĕç, пирĕн шăмă сарлака, пыра ларĕ!—тенĕ вăл.

Тăшмана хирĕç хăватлă та лайăх йĕркеленнĕ çар туса хумалла пулнă. Ленинпа Сталин Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене туса çирĕплетме чĕннине пĕтĕм çĕршыв хапăл туса йышăннă. Вĕсем чĕннине Чапаев та çав тери хавасланса йышăннă. Унăн отрячĕсем вара яланхи çар чаçĕсем пулса тăнă. Василий Ивановича çĕнĕрен тунă бригадăн командирĕ туса хунă, унтан ăна дивизи командирĕ туса хунă. Чапаевăн çар искусстви кунсеренех лайăхланса пынă. Хĕрлĕ Çарăн командованийĕ ăна Атăл леш енче чи ответлă ĕçсем хушса пынă. Чапаев вĕсене çав тери чаплăн пурнăçласа пынă, тăшмана темиçе вунă хут та çĕнтернĕ. 1918 çулхи июнь уйăхĕнче тата июль пуçламĕшĕнче Чапаев полкĕсем Уральск хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă. Вĕсем çĕр каçиччен 70 километр малалла кайнă та шуррисенчен Николаевск хулине ирĕке кăларнă. 1918 çулхи август уйăхĕнче чапаевецсем Самара хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă.

Чапаева çар академине вĕренме янă. Унта кăшт пурăнсан, Чапаев каллех Урал фронтне кайнă. Чаплă полководец Михаил Васильевич Фрунзе (вăл ун чухне 4-мĕш армин командующийĕ пулнă) халăх геройĕн çар талантне пысăка хурса хакланă. Фрунзе Чапаева фронтăн сылтăм флангĕнчи ответлă участока янă. Уральск хулине тытса илнĕ хыççăн Василий Ивановича тăшмана хупăрласа илме тата ăна пĕтерсе тăкма хушнă. Совет çарĕсен пуçĕнче тăрса, Чапаев çав задачăна питĕ чаплăн пурнăçланă.

Çĕршыв умне çĕнĕрен пысăк хăрушлăх килсе тухнă. Колчак çарĕсем Çĕпĕре йышăннă та Атăл шывĕ патнелле çывăхарса пынă. Большевиксен партийĕ пĕтĕм халăха çав хăрушлăха пĕтерсе лартма, Колчака Атăл патне ямасăр чарса лартма чĕннĕ. М. В. Фрунзе Чапаевăн 25-мĕш стрелковăй дивизине Урал фронтĕнчен Бузулук районне куçарнă. Çав дивизин Колчакăн шурă çарĕсене чи малтан пырса çапмалла пулнă, вăл çав çарсене чăнах та вара аркатмаллах пырса çапнă. Чапаев полкĕсем Бугуруслан тата Белебей хулисене йышăннă. Çав полксем татса кĕнĕ вырăна Фрунзе Совет çарĕсен тĕп вăйĕсене кĕртсе янă. Колчак фрончĕ кисренме пуçланă, тăшман Ĕпхӳ патнелле чакнă, унта вăл хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пĕр çĕре пухса тăратнă.

Ĕпхӳ патĕнче, Красный Яр районĕнче, Колчак çарĕн чи лайăх чаçĕсем калама çук хаяррăн çапăçнă. Шăп çавăнта ĕнтĕ шуррисем «Чапаев» ятлă кинокартинăра кăтартнă пек «Психически атака» тунă. Чи йывăр вăхăт килсе çитсен, Фрунзепе Чапаев çапăçакан боецсем хушшине пырса тăнă. Çакна курсан, красноармеецсем тата ытларах хавхаланса кайнă. Тăшман пораженни тӳснĕ. Ĕпхӳ хулине ирĕке кăларнă. Колчаковецсем Урал леш енне чакнă, анчах та вĕсен пурăнмалли кунĕсем сахал тăрса юлнă.

Колчака хирĕç Атăл çинче кĕрешнĕ вăхăтра Урал фронтĕнче пысăк улшăнусем пулса тăнă: шуррисем Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене хĕссе пынă, Уральск хулине хупăрласа илнĕ. Çав хулана ирĕке кăлармашкăн каллех чапаевецсене янă. Чапаевецсем çав тери хăвăрт пырса 200 километр кайнă. Вĕсем Атăл леш енчи тата Уралти çеçенхирсене тавăрăнни тăшмана хăратса пăрахнă. Грязная, Озерная, Соболевская станицисен районĕсенче тăшмана пуçĕпех çапса çĕмĕрнĕ. Чапаевецсем тăшман хупăрласа илнĕ Уральск хулине ирĕке кăларнă. Уральск хулине хĕрлĕ ялавсемпе илемлетнĕ. Ĕпхӳ патĕнче суранланнă хыççăн сывалса çитеймен «Чапая» хулари халăх çав тери савăнса, чунтан-чĕререн хĕпĕртесе кĕтсе илнĕ. Чапаев тăшмана малалла хăваласа пынă. Лбищенск хулине илнĕ, Гурьев хули еннелле кайса, темиçе форпостпа станицăна тытса илнĕ, çав шутра Сахарная станицине те илнĕ.

Чапаев çапăçура çынсене хытă тытнă. Вăл çар çыннисене хурçă пек çирĕп дисциплинăллă пулма, приказсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыма хушнă, анчах та каннă вăхăтра вара вăл питĕ уçă кăмăллă пулнă. Ун патне яланах çынсем канаш ыйтма çӳренĕ. Василий Иванович боецсемшĕн ашшĕ хăйĕн ывăлĕсемшĕн тăрăшнă пекех тăрăшнă. Çавăнпа ăна красноармеецсем питĕ хытă юратнă, ăна чунтан парăнса кĕрешнĕ. Ăна çав тери хисепленĕ, унăн кашни сăмахне тимлĕн итленĕ.

Совет халăхĕ халăх геройне, хамăр тăван çĕршывăн çуламлă патриотне, большевиксен партийĕн воспитанникне ялан асра тытать.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра граждăн вăрçи геройĕн Василий Иванович Чапаевăн çав тери кăмăллă та чаплă сăнарĕ Хĕрлĕ Çарăн воинĕсене хăйсен тăван çĕршывĕн чапĕшĕн çĕнĕрен те çĕнĕрен паттăр ĕçсем тума хавхалантарать. Хĕрлĕ Çарăн воинĕсем, Сталин ятне асăнса, çапăçăва кĕрсе каяççĕ, тăшмана çĕнтерсе пыраççĕ.

В. ЧАГАН.

ХРОНИКА

СССР Верховный Совет Президиумĕ К. П. Субботин юлташа Хатĕрлев Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă, Хатĕрлев Халăх Комиссарĕ пулса ĕçлеме Борис Александрович Двинский юлташа лартнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

сентябрĕн 5-мĕшĕнчен пуçласа

КУНСЕРЕНЕХ

документальнăй çĕнĕ фильм

«СЕВАСТОПОЛЬШĔН ÇАПĂÇНИ»

кăтартать.

Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.

Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме тытăнать.

Завода çакăн пек работниксем кирлĕ: метала хĕртмесĕр ĕçлес ĕçе пĕлекен инженерсемпе техник-технологсем тата экономистсем, плановиксем, бухгалтерсем, конторăра ĕçлекен служащисем (бухгалтер ĕçне вĕренме учениксене те илеççĕ); токарьсем, слесарьсем, штамповщиксем, прессовщиксем, электромонтерсем, литейщиксем, сварщиксем тата ытти рабочисем те (çак ĕçсене вĕренме учениксене те илеççĕ); строительствăра ĕçлекен рабочисем— платниксем, столярсем, штукатурсем, кăмака тăвакансем, малярсем, грузчиксем, лавçăсем тата подсобнăй рабочисем (çаксене общежитине вырăнаçтараççĕ).

Çак адреспа ыйтмалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 80, Бюро пропусков. Кашни кун 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсен 3 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

5—2

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00673 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.